Асамлӑ тухьясен ӑсти

Зинаида Вороновӑна хисеплесе

Асамлӑ тухьясем тӗрлетӗн
Ахах-мерчен шӑрҫасенчен.
Чӑвашлӑх сӑнлӑхне чӗртетӗн,
Хӑват илсе чун асӗнчен.

Ӑсу асамлӑ, пӑлхавуллӑ,
Эс хӑв та ама ҫын ятти.
Шухӑшлаву сулмаклӑ, вуллӑ
Йӗп вылятан йӑлтти-ялтти!

Тиретӗн кӗмӗллӗ-нухратлӑ
Ҫап-ҫаврака тенкӗсене.
Пӗлетӗн: чӑваш рат ӑратлӑ,
Киллет тӑшман тинкисене.

Паян тесен, паян ҫӗкленӗ
Ҫӗн Феникс-кайӑк Чӑвашьен.
Вӑл кӗмӗл-нухратпа «тӗкленӗ» -
Нихҫан пулман вӑл йӑвашьен!

Чӑваш йӑваш тени илемсӗр,
Чӑваш патвар тени паха!
Тухья, тевет, сурпан тумсемсӗр
Эпир каймастпӑр хупаха.

Хупах тесе лапа калатпӑр,
Лапра туй-вӑйӑ пухӑнать.
Кунта эпир такмак калатпӑр,

Кунта яш-кĕрĕм ухăнать.

Пуçа ухса, ташша çапатпăр,
Йăлтăр та ялтăр тумсемпе.
Ахальтен мар тевет çакатпăр,
Вăй виçнĕ майăн туссемпе.

Тевет, хушпу, тухья илемĕ
Пуянлăха яр кăтартать.
Турпай чăваш ялав-силемĕ
Хурахсене таçтан тартать!..

Çут асамат хĕвел тĕррийĕ
Эрешленет сан чунунта.
Алхапăлах сурпан хĕррийĕ
Тĕрĕленет сан аллунта!

Тавах, аппам, ăстаçă-маçтăр!
Тавах ăста аллусене!
Пуласлăхпа тĕррӳ «каласçăр»,
Тӳпе вулать паллусене!

Раиса Сарпи

Сарпи, Р. «Хĕвеллĕ, уйăхлă тухья…» : [стихотворение] / Р. Сарпи // Чувашские национальные головные уборы и украшения [Изоматериал] / [сост.] З. И. Воронова ; худож. И. П. Андреева. – Чебоксары, [2008]. – С. 7.